Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

# КАПКĂН

5-мĕш № Мартшăн 1928 ҫ. 4-мĕш ҫул тухать.

## Кун ҫук йапала.

Мартăн 10—25-мĕш кунĕсенҫе Шунашкарта „кайăксен“ кунĕ пулса иртет. Иалсенҫе „Капкăн“ каҫĕсем туса иртереҫĕ.
„Хаҫатран“.



„КАПКАН“ Хĕрарăмсен те кун пур, тырă-пулăн та кун пур, вăрманăн та кун пур, кайăк-кĕшĕкĕн те кун пур, пурин те кун пур, манăн анҫах кун ҫук, каҫ анҫах. Хăҫан ман кун пулĕши?

## „КАПКĂН“ йурри—ĕçкĕре.

(„Капкăн“ 3 çуллăхне хисеплесе çырнă сăвă).

Кукки, кукки кукрашки
Вара сана мăклашки;
Мăклашкийĕ сана мар—
„Капкăн“ илме укçа пар!
Пар, пар—укçа пар,
Укçи пултăр кĕмĕлли...
Кĕмĕл укçан хакĕ пур—
„Капкăн“ илме вăхăт пур...
— Тыгха, кукка, стакканне,
Тĕппи курка туса пар!
Стаккан тĕпне укçине
Иарса пама ан шелле!
Тĕппи курка тумасан,
Тĕпне укçа йамасан,—
алла курка ан та тыт,
Кукки, йатне—ан та илт!
Кук, кук кукамай,
Кукăҫ пĕçерсе памасан—
Кăмаки тўпи ишĕлтĕр!
Мана укçа памасан
Кĕсйи тĕпĕ çаралтăр!
Куҫҫи, куҫҫи-куҫҫенеç—
Куҫҫенеç мар—укçинех;
„Капкăн“ илме укçиҫҫĕ—
Укçи пулсан „Капкăн“ пур.
Теппи пиҫҫи пит ҫипер—
Кĕсйи тулли укçи пур..,
— Тытса парха куркине
Тĕпне кĕмĕл йарса пар!
Теппи пиҫҫи, тĕппи ĕç,
Манăн йата хисепле!
Мана каҫҫа париҫҫен
„Капкăн“ илсе памăнши?
Укçи, укçи-укçине
Манăн йысна йуратаť;
Çĕрме пуйан пулсан та
Манран курка тытмарĕ.
Тытин-тытмин—ан та тыт,
Пилĕк пусна хĕрхенсен.
Хыт пуйана—хыт кукар—
Ҫерет курки тивеймĕ...
Атте, ĕнтĕ—укçи пур,
„Капкăн“ илме кайами?
„Капкăн“ çинҫе пурте пур—
Улах ларма кулăш пур...
Кулăшши те—кулăшла—
Пит ҫас унта çакланма.

К. РУССАКОВ.

## „Капкăнăн“ хĕллехи такмакĕсем.

Куҫҫăр Иван тем васкаса
Асли патне ир килнĕ,
Хапха умăнҫе кĕтсе тăрса
Питне-куçне тăм илнĕ.

Лавка хуçин—саветушҫин
Туги темпе варланнă.
Пиҫĕкинҫи кăраççынĕ
Хĕл сухăнпе пăрланнă.

Çăварни хăнин мăн Иванăн
Шăннă кайнă пўрнисем.
Ĕçкĕ пирки çак айванăн
Тукмак пулҫĕç аллисем.

Укри инке килне маннă
Виç кун ĕнтĕ хăнара.
Хăмăр ĕпи çăмăлланнă
Пăруш хытнă картара.

Мăн хăнаран Çемен муҫи
Таврăнаť тет килелле.
Маттур маткин кăкăр аҫи
Ўксе йулнă, пĕсмĕлле!

Марйа аппапа Петĕр пиҫҫен
Пысăк инкек пулнă тет:
Кĕçĕн ывĕл сентре çинҫен
Мăн лаххана ҫамнă тет.

Çырма тăрăх кў ҫупаť те
Хĕлĕп çилĕ йур пухаť,
Ҫăваш пўртин ҫўреҫ çинҫен
Кунĕн-çĕрĕн шыв йухаť.

Хĕл сиввине тўсеймесĕр
Иурă тăсса йарари!
Пирĕн шкула хĕл çухатрĕ
Иур айĕнҫен тупар-и!

Н. Иевтоккимăв.

## Сăмакун тытнă.

— Иакку Мĕкĕти патĕнҫе сăмакун тытнă!

— Ну-у-у, кам тытнă?

— Милитси!

— Аппараҫĕпе сăмакунне конфискатси турĕ пуҫ. Сута лекрĕха ĕнтĕ аранах хайхи!

— Çу-у-у-ук! Сăмакунне куркапа тултарса тытнă милитси.

Макс. А.

# Самооплошени кампанинђе.

Самооплошени тума кулаксем ђарса тăни палăрать.
(Кореспотент çырăвĕ).




— Пур ĕçре те ђăрмантарса пырать ку кулак. Савăла та савăлпа çапса кăлараççĕ, кулака та кулакпах (ђышкăпа) çапса кăлармалла пулать.

## Авланайман сысна.

(Иуптарса калани).

Пĕр сысна авланма шухăланă.
Тек кайать ламсаса хăтана,
Çитмен йал ун умђе сахал йулнă.
Анђах çук, тупаймасть ыр матка.

Хăш-пĕри пыђђăка йуратмаççĕ,
Ие хăшин сăмсисем пуклакрах,
Теприсем çĕн тумпа пурăнаççĕ,
Ие куçсем пит аван,—сторовах!

Ах-ах, йăнăшать хай сысна,—
— Ту хађ вĕсене ес матка!
Пыђђăкпа нихçан та савăнаймăн,
Иуратмас вĕсене, —айукка!

Улгçиђ çул лайăх хĕр шыраса та
Сысналла майлă хĕр тупманран,
Хай сысна ђунтанах тарăхса,
Ылханать çĕнĕлле саккуна:
— Советах хĕрсене улăштарђĕ.
Советах винават ку ĕçре,
Пыђђăка хĕрсем ав йуратмаççĕ.
Мĕн тума кирлĕ вăл çĕн йĕрке!?
Иатлаçса ывăнса çитнĕ майĕ
Карĕ те выртрĕ пĕр ушака,
Авланмасп, çук-çук-çук! епĕ терĕ
Аванçке пыђђăкрах пурăнма!

АТТАИ М.

# „Хӗрлӗ ађа“.

Хӑш-пӗр йалкорсем вактӗвек, никамшӑн та инттереслӑ мар йапаласем çинђен çыраççӗ те, вӗсен саметкисем хаçата кӗреймеççӗ. („Йалкортан“).

Петӗрке Ваçли Иӑванӗ, вӑлах «Хӗрлӗ ађа», пӗре хайӗн умӗнђе выртакан хут татӑкӗ çине, тепре урамалла тухакан ђӳређе çине, унтан тӗлӗнмелле майпа вилӗмрен хӑтӑлса йулнӑ стена çинђе ларакан шӑна çине пӑхса илсе, тарӑнӑн шухӑшласа кранташне çыртса лараӗ.

«Хӗрлӗ ађа» йалкор мӗн çинђен хаçата çырса парасси çинђен шухӑшлаӗ. Çырас пулаӗ, çырмасан май килмест. Çырмалла та, анђах мӗн çинђен çырассине шухӑшласа тупма кулен-кун йӑварланаӗ,—пӗре çырнӑ йапала çинђен тепре çырма йурамасӗ.

— Пуп çинђен?.. Хм!

Хайӗн тетраҫӗ çине пӑхса илђӗ.

Пуп çинђен икӗ хутђен те çырнӑ,—пӗре „Тӗн сӗрӗмӗ сирӗлет“ йатлӑ саметкӑра, тепре «Пупсене ђарасђӗ» тенинђе çырнӑ. Урӑх ун çинђен мӗн çырмаллине тупайрас çук. Тийеђука çакла-тас! Анђах хӑш йенђен? Пит лайӑхђӗ «тийеђук ерех пиђки» тесе çырмашкӑн, анђах вӑл, шуйттан, ытти тийеђуксем пек мар, ӗçмест тата. Ним йенђен те пырса тӗртӗнмелли çук.

— Шкул çинђен çыраси мӗн? Айай! Аван пулмалла шкул çинђен çырсан. Тфу! Ун çинђен те виçӗмкун анђах çырса йанӑ.—Ара уђиттӗл ађасем умӗнђе урайне сурни ç нђен çырнӑђђӗ. Шкул çинђен çырас марха.

Мӗн çинђен çырасши? Ӳсӗрсем çинђен, çӗмрӗк кӗпер çинђен?

Ун çинђен те çырнӑ.

— Тупата, мӗн çинђен çырасха?—тесе ыйтаӗ сӗрӗмӗш хут хайӗнђен хай «Хӗрлӗ ађа».—Урамра кураймйпши мӗн çинђен çырмаллине?

Тинкерсех пӑхаӗ ђӳређе витӗр.

Ав Упрам Иӑванӗ иртсе карӗ—кулак. Упрам Иӑванӗ çинђен виçӗ хутђен çырнӑ.

Çуна иргсе каиаӗ. Çуни çинђе Укахви инке. Каллех çырнӑ ун çинђен—«Карђӑксем ђиркӳ урайӗсене çуса тӗн сӗрӗмне сарса пыраççӗ» тенӗ саметкӑра çырнӑ. Лаши çумне çыпçӑнма май килмест-ши? Лашине ђӑпӑрккапа хӗнет, тейес...Ђӑпӑрккана хӗнеме тунӑ тата... Ђӑ‹ӑрккапа лашасене хӗнес йӑлана пӗтерме кирли çинђен çырас мар-ши?

Ђӑпӑркка çинђен вирлӗрех сӑмахсем шырама пуçларӗ «Хӗрлӗ ађа».

«Халиђђенех пирӗн телейсӗр лашасене ђӑпӑрккапа хӗнемелли тискер йӑла халӑх хушшинђе пур»...

Анђах çак илемлӗ шухӑшласа кӑларнӑ хыççӑн, иккеленмелли шухӑш кӗрсе каиаӗ:

— Мӗнле пулӗ вара ђӑпӑрккасӑр? Ӑçтан тӑнсӑр-ђӗлхесӗр лаша сӑмахпа каланине тӑнланса илӗ? Манӑн хамӑн та ђӑпӑркка пур та...

Каллех шухӑша карӗ «Хӗрлӗ ађа». Урамра никам та çук, пӳртре лӑпкӑ: амӑшӗ кӳрше кайнӑ. Хайсӗр пуçне, тата тӑлӑха йулнӑ шӑнасӑр пуçне, никам та çук пӳртре.

«Хӗрлӗ ађа» çав ыйхӑллӑ шӑна çине пӑхаӗ. Ав шӑни лампӑ çийӗн упаленсе çӳрерӗ-çӳрерӗ те сӳрӗлсе, саметкӑ çине çырма хатӗрлесе хунӑ хут çине лепп татӑлса ӳкрӗ.

— Шӑна çинђен!—Конешнӑ, шӑна çинђен çырма йураӗ. Хӗлле те вилмеççӗ. Мӗншӗн? Мӗнле ђармасӑши йалсовет?

Хут çине ӳкнӗ шӑнине вӗрсе шӑлса пӑрахса, «Хӗрлӗ ађа» саметкӑ çырма тытӑнаӗ:

«ИАЛТИ ХУРТ-КӐПШАНКӐСЕМ».

„Ђухӑнсемпе вӑтамсем хушшинђе ђир-ђӗрсем саракан хурт-кӑпшанкӑсемпе кӗрешес ӗçе пуçламан та пирӗн йалта“... т. ыт. те.

Хӑвӑрт çыраӗ йалкор.

Çавӑн пекех хаçатри пуштӑ йешђӗкӗнђе те хӑвӑрт ответ çапӑнса тухаӗ:

«Хӗрлӗ—ађана» (Хӑмӑт йалӗ). Шӑнасем çинђен çырни каймасӗ. Ытла пӗђӗк йапаласем çинђен çыратӑн».

ИВАН ПР—В.

# Макҫим Коркки килес умӗн.

Иалти поет пулас текенсентен_нумайӗшӗ класҫӗксене пӗлмеҫҫӗ.



Поет йулташӗ: Макҫӑм Коркки килмелле Шупашкара, тесе ҫырнӑ „КАНАШРА“.

Поет: Вӑл русски коркирен хайартарахи мӗн вара?

## Ӗҫ планӗ кирлех ӗнтӗ.

Илйе Василйӗв пӗр пит хисеплӗ уҭрештенире тешурни милитсионер пулса тӑраҭ. Кунта пушшех йӗркеллӗ ӗҫлеҫҫӗ, плансӑр ӗҫлекенсене те ҫакӑнтах хӗртеҫҫӗ. Унта ӗҫлени Илйе Ваҫилйӗв пӗтӗмпех урӑх ҫын туса хуҭӗ, вӑл плансӑр ура та йарса пусмасҭ. Ҫак иртнӗ вырсарни кун унӑн ӗҫ планӗ тӑрӑх каҫхине 10 сехетре тешурит тума каймалла пулнӑ, план тӑрӑхах унӑн малтан Ҫӗрӗҫ Комиссариатне каймалла пулнӑ. Унта вӑл 9 сехетре ҫитсе «ҭӗрҭӳшни» тейекен пӳлӗме ҫитсе, пысӑк сӗтел ҫине сарса пӑрахнӑ ҫӗр планӗ ҫине пырса выртнӑ, пуҫӗ айне ҭӗркесе ҫырнӑ ҫӗр планӗсене хунӑ. Ун ҫумне тепле вара сторошиххӑ пырса выртнӑ иккен. Вӑл та унта план тӑрӑхах пынӑ пулмалла. Вӗсене ҫапла ҫӗр планӗ ҫинҭе шухӑша кайса выртнине кура, ытти сторошиххӑсем, план тӑрӑх ӗҫлесе пыракан ҫынна ҭӑрмантарса, ҫуртсене пӑхакан савету йушҭи патне сӗтӗрсе кайнӑ. Ҫапла ҭӑрмантарнӑшӑн ӳпкелесе, Илйе Ваҫилйӗв сторошиххӑсене вуҭверне те кӑларса кӑтартса пӑхнӑ, теҫҫӗ.

Ех, айвансем! мӗн ҭӑрмантармалла пулнӑ ӗҫлӗ ҫынна? Тен план тӑрӑх унӑн милитсирен те тухса ӳкмелле пуҭ. Пӗлме ҫук ҫын ӑшӗнҭине. План вӑл пысӑк йапала.

Сенӗк.

# Пиллӗх.

Атнар муђин пурнӑҫӗ ахаљ ҫапла тӗкӗнсе пырат̆ пуљ. Ӗлӗк, пӗђӗкренпех, темӗн те курса ӳснӗскер, хаљ те ытла ырӑ курсах пурӑнаймаст̆. Ҫулӗ ҫаплах малалла ђупат̆. Хӑй кайалла пӑхат̆: куҫӗсем курмаҫҫӗ, шӑлӗсем ҫук, шӑмшакӗ ҫӗмӗрлет, куҫҫулпех кӗрлет. Анђах ватӑ тесе, камӑн алӑпа сулса, тӗнђерен тарас килӗ-ха? Атнар муђи те пурӑнасах, тет. Тӗрлӗ майсемпе пайӑнах та ватӑ кунлӑхсене сирсе, ҫамрӑк ӗмӗрне ыталаса илӗђђӗ. Мӗн, тӑвӑн? Куна пирӗн йалтах тума ҫук вӗт!.. Амерӗкре пулсан!..

— Ей-йай-йай, ни луђшӗ... пӗрех хутђен,—тет Атнар муђи, хӑйӗн ӑшӗнђе авӑрса тӑракан шухӑша нихҫан та кӑларса калайманскер.

— Атте, пађђӑшкӑ илсе килеси тен, тет ывӑлӗ ӑна хӗрхенсе.

— Ҫавӑнпа айлататӑп та ҫав, тет муђи.

Ывӑлӗ ула питлӗ кӑвак лашана кӳлсе лартат̆ те, вӗҫтерет пупа сӗтӗрме.

— Ҫапла, ҫапла, пађӑшкӑ, атте нађарлансах ҫитрӗ те, пырса ҫӑмӑллатмастӑнши, терӗм те...

— Пырасси пырӑп та, анђах есӗ?

— Лашапах, пађӑшкӑ.

— Вӑл ҫаплах пуљ те... Леш, мӗнне?..

— Леш, мӑнинех кӳлсе килнӗ.

— Ҫуни тӗпӗнђе тата?

— Ҫемҫине хутӑм, пађӑшкӑ, сысна ырӑнӗ ҫинђенех илсе хутӑм. Ларма ҫемҫе пултӑр, терӗм.

— Леш, ҫимелли ҫинђен ыйтатӑп санран, терӗ пуп сассине хӑпартса.

— Лаши ҫирӗп-ха вӑл. Кунта килсе кайиђђенех ҫимесӗр те тӳсет. Иртнӗ каҫхине те лайӑх тӑрантарнӑха ӑна. Айта, пађӑшкӑ. Лашишӗн ан куљљав!

— Лашине ыйтмаҫҫӗ санран. Мана ваљђи...

— Хаљ апат вӑхӑђӗ ҫитеймен терӗм те, сан ваљђи нимӗн те илсе килме пӗлеймерӗм.

— Есӗ ытла та... Айта... терӗ пуп кӑвак куҫӗсене ҫутӑлтарса. Хӑй те вӑр-вар тумланса, тухса ларђӗ ула питлӗ кӑвак лашаллӑ, сысна ђӑмласа ҫемҫетнӗ улӑмлӑ ҫуни ҫине.

Атнар муђи хӑйне пуп кӗлтума пырса, пиллӗх парса хӑварасса кӗтсе пушшех ахлатса выртат̆.

Пуп ҫитрӗ. Малтанхи сӑмахӗ ҫапла пулђӗ:

— Мӗн ахлатса, пӑлахайа персе выртан, ват супнӑ?!

— Ей-йай-йай, пађӑшкӑ...

— Ну кала, мӗнле ҫылӑхсем турӑн...

— Мӗнле ҫылӑхсем тумалла еп. Хамӑн арӑм ҫук. Сан пек йут арӑмсем патне ҫӳресе, пусма айсенђе выртса ҫӳреместӗп.

— Ан шарла, Атнар!..

— Мӗн аншарли пур? Сан пек ҫын ђӑххине пусман, ҫын ампарне кӗрсе ҫилом ҫаратса тухман. Сан пек...

— Атнар! Ей, турӑ, ҫак Атнарӑн ҫылӑхӗсене каҫар!..

— Мана мӗн каҫармалли пур. Ху пуҫна пултӑр, хӑвӑнне каҫартӑр, хушӑн лайӑхрах кӗлту. Ђӑнах...

— Лашине ҫавӑрӑрха, терӗ пуп хӗрелсе кайса.

— Пађӑшкӑ вилеђђен пӗрре пиллесе хӑварха хӑт! Вилетӗп вӗт!

— Есӗ ватӑ, есӗ шалккӑ мар, вил!
Вӑт, ҫакӑ пултӑр сана манран пил!
Атнар старик туйапа сулса йаљӗ,
анђах пуп тухса кайнӑ пулђӗ.

Ҫапла пулђӗ пупран пил: шалккӑ мар—вил! Ҫ. ШӐПЂАК.

## Ӗҫкӗпе кӗрешекен сутйе.

Вӑрнар районӗнђи Аниккан сутйа Аслӑ ҫӑварни кунне (февралӗн 19-мӗшӗнђе) хӑйӗн ҫекреттарӗпе Тури Кӑканарти Кераҫҫим Йекорӑв кулак патне ӗҫме карӗ, ҫӗрӗпех ӗҫсе ташлана.



Сутйа: Ей-ну, май-ну! Пайан епӗ ӗҫкӗре, мухмӑр ђухне сутйере.

# Паллӑ ҫынӑн илемлӗ ӗҫӗсем.

Кам пӗлмест ҫӗрпе вӑрман ӗҫлекенсен Сойус Правлени ђленне Оссанӑв йулташа, Рафайӑл Афанаҫйӗвиђа. Шупашкарта мар, Куславккӑра та лайӑхах палласҫӗ, Шамкайра та пӗлесҫӗ пулӗ. Ун пек паллӑ ҫынна хисепӗ те виҫесӗрех. Ҫак иртнӗ йанвар уйӑхӗнђе пулнӑ Наркомҫемри веђђӗра та ӑна хиселлӗ хӑна шуђ°пе ђӗннӗ пулнӑ. Унта хиселлӗ хӑна шуђӗпе, Оссанӑвӑн та тӗрлӗ путылккӑран туганса пӑхмалла пулнӑ. Ђылайах тутанкаласан, вӑл кӑмӑлӗ уҫӑлнипе, веђђӑрти халӑха ђыс тӑвас тесе, тӗрлӗрен фоккӑссем катартма тытӑннӑ. Ђӑн малтан хӗрарӑмсене ђӑнахах та арҫын сылтӑм айак пӗрђинђен тунине пӗлтерес шутпа, вӑл хӑй арӑмӗн айак пӗрђисене тӗрӗслесе кӑтартнӑ.

Йулашкинђен, хӑй пӗђӗк ађа ђухнехине аса илсе-и, йе авалхи пиплире асӑннӑ Навухотоноссӑр патшан йӑлине кӑтартма шутласан-и, тӑваттӑ уралла упаленсе кӑтартнӑ.



Килне те ҫаплипех упаленсе кайасран, тата веђђӗра ҫав тери ђыс тунӑшӑн, Оссанӑв йулташа арӑмӗпе иккӗшне йунашар лартсах лашапа килне леҫтернӗ. Ҫапла илемлӗ ирттересҫӗ паллӑ кулђтурӑллӑ ҫынсем веђђӑрсене. Ун пек ҫын ђӑнахах та ҫӗрпе вӑрман ӗҫлекенсен сойусӗнђи ђленсене йертсе пыма пултаратех... хупах ҫулӗпе.

СЕНӖК.

# Шур мамӑк пек йур ҫинђен.

Ҫуркунне ҫитессине систерекен пӗр ӑшӑ кун ҫиђӗ ҫын калаҫса ларнӑ урамра. Ђи хӗрринђе ларакanni ыйтнӑ хӑйӗн ҫумӗнђе лараканнинђен:

— Калаха, мӗнӗн туйӑнат сана ҫак хӗллехи йур; тепӗр сӑмахпа каласан, мӗн аса килет сана йур ҫине пӑхса ларнӑ ђухне?—тенӗ.

**Пӗррemӗш** каланӑ:

— Копператтиври прикашђӑк аса килет. Сивӗ вӑл кирек хӑҫан та...

**Икӗмӗш** каланӑ:

— „Темиҫе ҫула пымалла" тесе пуҫласа йанӑ камппани аса килет. Темиҫе уйӑхранах пӗтсе ларат вӑл.

**Виҫӗмӗш** каланӑ:

— Тӗрмерен тухнӑ растратђӗк аса килет. Йӗп куҫӗ пек шӑтӑкран та пӗр пасма кӗме пултарат йур (растратђӗк та копператтива кӗреткӗретех).

**Тӑватӑмӗш** каланӑ (хӗрарӑм):

— Упӑшка аса килет. Ун ђӗринђе, йур ҫинђе кӑмпа тупайман пекех, йурату тупаймӑн.

**Пилӗкӗмӗш** каланӑ:

— Пухура итленӗ отђот пек, киле тарас килекен пулат унтан.

**Ултӑмӗшӗ**:

— Пӳрократисӑмпа кӗрешни аса килет. Пӳрократисӑмпа кӗрешнин те, йурпа витӗннӗ ҫӗрӗн те, вӗҫӗ-хӗрисем курӑнмасҫӗ.

Унтан малтан ыйтаканнинђен хӑйӗнђен ыйтнӑ:

— Хӑвна тата мӗн аса килет йур ҫине пӑхсан?—тенӗ.

Ирӗксӗртереххӗн шӑлӗсене йӗрсе йарса каланӑ ҫиђӗмӗш:

— Хам аса килет. Хыймалла—кассинђи пулӑшком претҫетаттелӗ епӗ. Раштавра та пӗр кӗреҫе йур ыйтса илеймӗр есӗр пиртен,

ИВ. М.




## Равноправи пирки.

Таçта хăйаматра 3 çулхи аҫана йалисполниттĕлне суйлани çинҫен вуланăҫҫĕ епĕр пĕрре. Вăл таçта пулнă, Ҫăваш респуплĕкĕнҫе урăхларах.

Кăмакалта (Çĕрпӳ р.) хресҫенсем пĕр 62 çулхи карҫăка испониттĕле суйланă. Ма кунашкаллине суйлаттăр, тесе ыйтсан: халĕ равноправи, халĕ хĕрарăм та çĕрпе усă курат҄, вĕсене мĕншĕн çӳретес мар, теççĕ. (Раман).

Йалсоветҫĕ равноправи пĕлет пулсан, йалсовет полошенине пĕлмест. Пĕлĕҫҫĕ те, анҫах пĕлмелли тухса ӳкнĕ. Пулат҄ ун пек инкек!

## Хастарлăх ăçта!

Аслă-Патĕрйел районĕнҫе йалĕçтăвкомсем (пурте мар та) паттăрла ĕçлеççĕ. Пит хастар.

«Партийтсă» çырат҄:

«Çĕнĕ-Ахпӳрт йалĕçтăвком претçетаттĕлĕ пулнă А. Рументсăв хăй кӳршĕнҫи тăлăх аҫасене икĕ куп вăрман панă та, вара вăл вăрмана кайран, тăлăх аҫасене пĕлтермесĕр, хăйĕн тесе сутнă. Тăлăх аҫасем йĕреççĕ».

Йĕресси пулĕ вăл. Инçе-и сирĕн йалтан тĕрме? Рументсăва унта ҫĕнеççĕ, тет. Тĕрмерисем курасшăн ăна.

## Халĕ те кавлесе тăрат҄.

Çын патĕнҫе йĕкерҫĕ çисен, тутана кĕсен тухат҄, тенĕ ваттисем.

Ассакассинҫи (Елĕк р.) Трахвин Йăванĕ Кукар Петӳккинне, çăварни йĕкерҫи çинĕ ҫухне, тутине çыргса ҫăмласа йанă. Халĕ Петӳкĕ пуҫнитсăра выртат҄. Çакăн хыççăн та вăл ерехе йуратĕши, тет Сава.

Йуратмасăр. Йĕкерҫи те тутлă, тути те тутлă (тута ашçке вăл!). Килес Мăнкунта каллех çийес килĕ вăл тутлăха. Ҫам-ҫам ăратти пуҫ вăл.

## Алимент шыракан.

Çĕнĕ йĕркесене калама çук аван пĕлеççĕ йалсенҫе. «Шкалĕк» çырат҄:

Ишлĕ-Çĕнйалта (Шупашкар р.) Тукки Танилин арăмĕ йăвăр çын пулнă. Танилана та укçа кирлĕ пулнăран, Çтаппан Йăванне: есĕ ман арăма йăвăр çын турăн, тесе алимент ыйтат҄, тет.

Танила, Совет Сойусĕнҫе ун пек саккун çук пек те, саншăн кăларнă пули анҫах. Саккунсене вуласа пăхха.

## Канфет хуçисем.

Ваҫккă çырат҄:

Выла пасарĕнҫи (Иет. р.) Миккашкă ывăлĕсем канфеткăсене ыраш ҫустинҫен туса, пасара сутма илсе аннă. Канфеткăсене ыраш çăнăхĕнҫен çăраççĕ те, унта кăшт сахăр йараççĕ, тулашĕнҫен решлĕ хутсемпе ҫăркаççĕ. Вара кашнине пикшер пуса сутаççĕ, тет.

Хăйсене те ыраш ҫустинҫен тунă вĕсене, мĕншĕн тесен вĕсене илекенни халиҫҫен никам та пулман. Малалла илĕçи анҫах... тĕрмене.

## Манифестпа каçнă.

Октăпĕр револютси 10 çул тултарнă хыççăн, Касаккассин вăрманĕ те прĕке тухрĕ. Камăн мĕн ҫул касас килет, çавăн ҫухлĕ касма йурат҄.

Мултикас çыннисем—Ваççили Романҫăпа Раман Никколайĕвăн, çултаăка пăхма тунă токăвăр тăрăх, тата 7 уйăх вăрман пăхмалла, анҫах йалĕçтăвком укçине токăвăр тăрăх тӳллесе пыман пирки, вăрман пăхма пăрахрĕç вĕсем. Иалсовет шарламаст҄, тет Иулташ.

Ытти ĕçсене те йалсовет ҫленĕсем çавăн пек йапăх ĕçлесе пырсассăн, манифес тăрăх вĕсен слушпи срукне те каçарса памалла марши?

# Хвершӑл хупларӗ.

(Пулман пулсан та, пулма пултаракан йапала)

Ҫулла. Ӑшӑ кун. Сарайӗнҫе тапкаланса платникленетӗп. Асӑрхаман вӑхӑтра кашта ҫинҫен тимӗр кӗреҫе мурӗ касмалла ӳкрӗ те, ман сӑмса татӑлҫӗ ӳкрӗ. Ним тума та ҫук, сӑмсасӑр пурӑнма ӗнтӗ кӗрек кама та паллӑ, аван мар. Ҫасрах сӑмсана хутпа ҫӗркесе ҫикрӗм те, хвершӑл патнелле тухса вӗҫрӗм. Сӑмсаран йун ытлашши йухасран, как калас, пӗрмайах ывӑҫ тупаҫпе пусса ниҫталла пӑхмасӑр хвершӑл патнелле ҫупатӑп. Йӗпе ҫине сапа тенешкел, ман тӗллӗне татах тепӗр инкек сиксе тухрӗ.

Мана ҫара уран ҫупаканскере Ваҫҫи кумасен йатти тем муршӗн ҫиленнӗ, сисмен хутран ура пуҫ пӳрнине татнӑ илнӗ. Аран-аран йатӑран ура пуҫ пӳрнине туртса илтӗм, нимпе те парасшӑн мар катӑршнай йаттийӗ.

Ура пуҫ пӳрнине те хутпа ҫӑркаса, сӑмсана пуҫтарса хунӑ кӑсйана ҫикрӗм.

Васкаса ҫупнӑ майӗпе хвершӑл патне ҫитрӗм ҫитрӗмех. Хвершӑл мана сӑмсасӑрскерне курсан тӗлӗнсе хытсах кайрӗ.

— Мӗн пулнӑ сан сӑмсуна, кама сутрӑн?

— Тимӗр кӗреҫе касмалла ӳксе татса пӑрахрӗ, йат турташшӗ! Акӑ тата кунта килнӗ ҫух тепӗр мур йатти ура пуҫ пӳрнине ҫыртса татрӗ.

Хвершӑл, как калас, пушшех хытӑ тӗлӗнҫӗ.

Татах сӑмсана, татах пуҫ пӳрнене ҫасрах кӑсйаран кӑларса хвершӑла тыттартӑм.

— Ҫасрах йусаса йар-ха: йулташ хвершӑл, сана ахалех туман, тетӗп.

— Пӗр тӳшӑн ҫӑмарта, 5 кӗренкке ҫу паратни? Вара тӳрлетӗп, тет ман хвершӑл.

— Тӳрлетсен 6 тӳшӗн ҫӑмарта пӗр пӑт ҫу та хаклӑ мар, йал кулли, сӑмсасӑр мӗнле пурӑнас ман, ахалӗн ҫилхвилӑс йерне тейӗҫ.

— Кайа йулсан кайу шӑтаӑ теҫҫӗ. Сана йусама шуткӑ тетӗним?—турткаланаӑ ман хвершӑл.

— Шушкине те парӑп, ҫасрах тӳрлетха хвершӑл йулташ...

Иурӗ терӗ те ман хвершӑл мӑн саспа, темлескер шӑршлаттарҫӗ.

Малалла хвершӑл мӗн каланине ним те астумастӑп, мӗншӗн тесен епӗ хытӑ ҫывӑрса кайнӑ.

Мана сӑмсасене йусама ҫывратнӑ иккен вӑл.

Унҫен те пулмарӗ, ҫасрах тӑр! Сӑмсупа уру пуҫ пӳрнине те йусанӑ, тесе силлесе тӑратрӗ мана хвершӑл.

Иапӑр-йапӑр сиксе тӑтӑм.

— Иалтах йусарӑни?

— Котовӑ, ан канҫӗрлесе тӑр. Ҫасрах кай килелле, ахаллӗн ытти ҫирлӗ ҫынсене сыватма канҫӗрлетӗн,—киле каймаваскатаӑ мана хвершӑл.

Сӑмсана тытса пӑхрӑм та, хӗпӗртесе ҫутах ташласа йараттӑм. Ҫӑнах, сӑмса вырӑнҫе пӑхап та, сӑмса пекки лараӑха мавӑн! Хвершӑла виҫӗ хут спаҫипӑ, сӑпаҫҫипӑ, шутсӑрах сӑпаҫҫипӑ, тесе тав турӑм та,—килелле тухса вӗҫрӗм.

Киле ҫитсен, ман карҫӑк манран хӑраса кӑшкӑрсах йаҫӗ.

— Ара ес, йыт турташшӗ, мӗнле-е-е!.

Малалла ним те калаймасӑ, хӑй патне мана шакӑ та йамасӑ.

Ҫасрах куҫкӗски ҫине кайса пӑхрӑм та, ах-у-ух!—ман сӑмса вырӑнҫе ура пуҫ пӳрни лара параӑ.

Ҫасрах ура пӳрни ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӑм.

Е-йа-йай, ман ура пуҫ пӳрни вырӑнҫе сӑмса лара параӑ.

Халӗ шутсӑрах канҫӗр. Кашни сӑмса шӑнкармассӗрен, атӑ хуса ҫӑрманас пулаӑ. Сивӗ ҫанталӑкра уй варринҫе сӑмса шӑнкартас пулсан,—атӑ хуса сӑмсана тасатасси калама та ҫук канҫӗр.

Тата пушшех кансӗр, ура ҫӗрни касас пулсан,—сӑмса вӗҫӗнҫен касмалла.

Карҫӑка ҫуп тӑвасси ҫинҫен шутламалли те ҫук,—ан кил! ҫӗрнӳ сӑмсана, касаӑ сан!!!—тесе йатлаҫаӑ.

— Малалла темле пурнтарас тет ӗнтӗ мана катӑршнай хвершӑлӗ,—е-ех сӑмса-а-ам!..

Илтнинҫен АТТАИ ҫырса илнӗ.

# Йуратуран сыхланăр!

Хутарти хвершăл пĕр майах: арăм йуратмасť, амађ çисе вилетĕп, тесе ђупаť.



— Кам та пулсан вилни мĕн, хвершăл ђупса кайаť.
— Çук, вăл аптеке амађ çисе вилме ђупаť.

# „ПРОКРЕС“ вилли умĕнђе.

(Панихитă вырăнне).

Ертементи (Вăрн. р.) йалхуçалăх копператтивĕ „Прокрес“, правлени тулккăсăр ĕçленипе, пĕтсе ларђĕ.

Çуралђĕ „Прокрес“ пит хастар та ĕçђен,
Иалсем хушшине ђапне сарђĕ;
Ун ĕçĕ çумне, хавхаланнă хресђен
Пур-çук укçипе çывăхарђĕ.

Сасартăк (кам аврĕ, кам пўрђĕ пĕлмес)
Пур ĕç çурăкне кăлтăк тулђĕ.
Шав пурнăç хупланђĕ—аманђĕ „Прокрес“,
Ертел пуш çуртпа тăрса йулђĕ.

Пулкахтĕр Тинўк, ђакăр куç Наврипе
Темме Çĕпĕре тухса тарђĕ,
Ертел халăхне пур йалсем таврипе
Тинўк тăлăха веç хăварђĕ.

Ех, мĕскĕн „Прокрес“! Санăн шут шăрçисем
Хисеп тăвасса пуђ, кĕтеççĕ.
Ликвитатсине кĕреймен шăшисем
Плуксен тимĕрне ав çийеççĕ.

Тăрап еп, хресђен, сан виллў умĕнђе,
Кĕске пурнăçна асăнатăп.
Выђаť шурă йур сан лапку умĕнђе
Кĕртпе варăнаť вăл—сăнатăп.

Амак тытиђен ес наклатсăр, мелпе
Виç çул йуппинђе сут тăваттăн.
Вилмен пулсанах хăвăн ерттелпе
Комун тĕнђине çывхараттăн. **КЕЛИ.**

### Аван иртрĕ.

— Ну, мĕнле? Есĕр праçнике лайăх иртертĕри?

— Пит аван иртерђĕç. Кашни кун ĕçкĕ, тата сăмакун та пурте пур. Аван иртрĕ.

— Çук, еп çăварни çинђен мар, «Хĕрлĕ çар 10—çул тултарнă» праçнике иртерни çинђен ыйтатăп.

Макçимăв.

# Ђăваш респуплĕкĕнђи инвалитсен çписки.

| Хушаматпа йат? | Ăçти хăйа-матрисем? | Мĕнле йышши инвалит? | Мĕнле майпа инвалит пулнă? | Токкумĕнђĕсем çине ресођутси хуни (хĕрлĕ кранташпа) |
|---|---|---|---|---|
| 1. Çомок Кирили | Иулашсем (Çĕрпӳ р.) | Вăрçă инвалиђĕ | Вăрçăра Коновал Васли хăлхине татсă илнĕ унăнне | Коновал Васлин хăлха парапанне кăларса илсе Çомок Кирлине парас |
| 2. Акрипинă Танилăвă | Йулашри (Çĕрпӳ р.) комсомол йађейккин çекреттарĕ | Миме инвалиђĕ | Кума пулса | Акриппинă куммана «ашшĕн, ывăлĕн, çветтуй сывлăшĕн йађĕпе», йĕплĕ çăмах шывĕнђе тĕне кĕртес хăйне, унтан «Капкăн кĕнђĕлерĕнђи» ерхелипе венђет туса йарас |
| 3. Хурал пўрђĕ | Ђалăм-Кăкшăм (Вăрнар р.) | Ĕç инвалиђĕ | Простугă пулнипе | Çамрăклатмалли амађ партарас |
| 4. Матрускин Елӳкĕ | А.-Kaçaлсем (Патĕрйел р.) | Арăм инвалиђĕ | Ӳсĕрпе мăшăрсăр йулнă. Халĕ йалсем тăрăх: ман арăм кунта çуки, тесе çӳрет | Мăшăрĕсем татăлса йулнă мăшăрсен инвалитла çпискине кĕртсе «Капкăнпа» мăшăрлантарас |
| 5. Çтаппан Илли | Аслă-Мамисем (Канаш рай.) | Вăрçă инвалиђĕ | Унăн сылтăм хăлхине Павăл Микули çĕçĕпе касса татнă | Тăлăха йулнă хăлхине 18 çула çитиђђен тăрантарса ӳсрамаллăх, Павăл Микулинђен алимент шырас |
| 6. Устанăв Елекçин 4 уйăхри ађи | Тĕмпексем (Вăрнар р.) | Вилĕм инвалиђĕ | Ашшĕпе Хурăнсур-Çармăса ĕçме кайсан, вилсех кайнă (вилĕм инвалиђĕ пулнă) | Инвалитсене йусамалла: инвалиђĕ хăй тупăкра пулсан, ашшĕне йусас... йусанмалли çуртра |
| 7. Мирун Матки | Арапуç йалĕ (Вăрмар р.) | Кађђă инвалиђĕ | Кăçал хĕре памастпăр тенĕшĕн, Çтенккипе Мишук ура çине тăраймиђ пулиђђенех хĕнесе инвалит тунă ăна | Çтенккипе Мишука авлантарас... сутра рекистратся туса |
| 8. Краснов Ваççили (комсомолĕс) | Мăнтăр йалĕсем (Патĕрйел рай.) | Инвалит пулмалласкер | Нумай ĕçнипе хырăмĕ кӳпĕнсе шартлатса çурăлса кайса ĕçкĕ тĕлĕшĕнђен инвалит пулмалла çын | Комсомолтан «пенççи» парас, хырăмне сăрапа çĕлесе йарас |

Çпискă тĕрĕс тесе ал пусатăп: ИАВАН-МУЂИ.

# ТАРАС.

Ирхине ирех,
Тӳрĕрен тӳрех,
Уттарҫĕ Тарас
Мĕн кĕтсе тăрас?!
Çумри вăрмана
Пушăт сăптăрма.
Ҫĕлĕмне хыпрĕ,
Пуртине тытрĕ,
Аврĕ пĕр çăка,
Анҫах... пурти мăка
Касмалла касмасть
Сасă çеç тăвать.
Виççĕ вăл хуҫĕ,
Тăваттă тăҫĕ,
Пуçне хăй тайрĕ,
Шухăша кайрĕ—
Пуйма шутларĕ,
Йурă пуçларĕ:
— Пушăт касами,
Укçа тăвами,
Хăна пухами,
Ташша йарами,
Савăнтăр пĕрре
Ватăлнă ҫĕре.
Иурĕ вĕç пĕтсен,
Пĕр кĕтмен çĕртен,
Вăрттăн—сасартăк
Ик çамрăк—йаштăк
Тухрĕç те тăҫĕç,
Тараса тытрĕç:
— Ехе-е-е!
Лекрĕне?
Ех, ти, ват супнă,
Пушăтлăх тупнă...
Пушăт вăл—хаклă.
Кала, йату мĕн йатлă?!
Тарас хăраса,
Пурта пăрахса,
Йенсине хыçрĕ,
Çăварне уçрĕ:
— Тарас...
— Тарас?..
Аçта тарас?..
Ех, та мошенник.
Тара-а-ас...
Пурт тăршши йарас
Вăт тепе—тарас!
Ик çамрăк—йаштăк
Вăртик те вартăк
Хуҫĕç Тараса
Илҫĕç таптаса:
— Ну, кала йатна,
Ан кай тамăка!
— Ах, ай, ай Тарас.

Тарас...
— Ехе-е-е...
Хăпати сехре?
Тарма тăраси—
Татах тарасси?
Кала йатна
Сволоç!
Ирҫĕç ирмеллех,
Тарас вилмеллех.
Вилсен тин кайран,
Кайрĕç вĕт халран:
— Хĕ, ма йамармăрха,
Тартăр пулаҫҫĕç...

* * *

Тараса хуҫĕç—
Ҫĕрĕ çĕр айне.
Кăсене хупрĕç—
Шурă тĕрмене.
Вара тин пĕлҫĕç:
«Тарас» ҫăн йат икенне.

Ç. ШĂПҪĂК.

# Сивĕ ҫух.



КӲРШĔ ÇЫННИ: Есĕр пӳртре тараракансене шăнтаттăри мĕн çак, капла мунҫара апат çисе ларattăр.

КИЛ ХУÇИ. Йенер йене пăрулари те-ха, йене усратпăр пӳртре. Р—и.

## Комсомол йаҫейккинҫе.

Çекреттарĕ: Пайан сан çинҫен пӳрора шалăпă пулҫĕ. Сана комсомол уставне пăхăнмавшăн выкăвăр памалла турĕç.

Комсомолĕç: Сана епĕр апла пулсан МОПР-тан кăларса сирпĕтетпĕр. Есĕ те 3 хутҫен пухха пыман, ҫлен укçи те тӳлемен.

# Йут патшалӑхсен йумӑрӗ.

## Тиректӑр ҫумӗнҫе.

**Ф. Мӳллӗр ҫырнӑ йумореска.**

Хапрӑк стурӑшӗ Мейӗр итлекен ҫын пулнӑ, вӑл—йуратмалла (аҫаш) аҫаскер. Пур йенҫен те вӑл хоспотин тиректӑр—хапрӑк хуҫи Шуҫтс майлӑ тӑнӑ; йалан ӗҫлекенсене хирӗҫ пынӑ... Ҫак пӗрре хӑйӗн хоспотин тиректӑрӗ патне шалу ӳстерсе памӗши тесе ыйтма кайнӑ. Вара ҫакӑн пек интереснӑй калаҫу пулса иртнӗ вӗсем хушшинҫе:

— Ах, хоспотин тиректӑр, тенӗ Мейӗрӗ,—есӗр мана пӑртак шалу ӳстерсе пама пултарӑттӑрҫӗ.

— Пит нумай ӗҫлерӗр пулӗ ҫке есир, Мейӗр?

— Епӗ! Ҫапла, епӗ лаша пек ӗҫлерӗм.

— Пӑхӑпӑр! Иртнӗ ҫулта пирӗн 336 кун пулнӑ, ҫӑнмар-им?

— Ҫаплах ӗнтӗ.

— Халӗ шутлӑпӑр: есир кунне 8-шар сехет ҫывӑрнӑ, ҫӑнмар-им?

— Ҫаплах.

— Вӑл ҫулталӑкӑн 3-мӗш пайӗ пулаҟ, йе—122 кун. Иулаҟ 244 кун.

— Тӗрӗс.

— Кашни кун 8-шар сехет ирӗк пулнӑ, ку каллех 122 кун пулаҟ. Ҫапла тата 122 кун йулаҟ.

— Пит тӗрӗс.

— Вырсарни кунсем ним те ӗҫлемене пӗрех; кунта каллех 52 пухӑнаҟ. Тата ӗнтӗ пирӗн 70 кун йулаҟ.

— Хм... ҫаплах.

— Тунтикунсенҫе ҫуршар кун ҫеҫ ӗҫленӗ, тата 26 кун катӑлаҟ тә, йулаҟ 44 кун.

— Ҫапла, ҫапла ӗнтӗ.

— 14 кун отпуск шутланаҟ, ҫапла-и?

— Ҫапла, отпускра пулнӑ епӗ.

— Тата пирӗн 30 кун йулҫӗ; пӗлтӗр праҫнӑк кунӗсем 9 пулнӑ, хайхи 21 кун ҫеҫ тӑрса йулаҟ.

— Ах, хм, ҫапла... ҫап...ла...а

— 5 кун есир ҫирленӗ. Иулаҟ 16 кун, ҫӑнмар-им?

— Ҫӑ...ннн.

— Тата кашни кунах пӗрер сехет апат вӑхӑтне кайса пынӑ, пурӗ вӑл 15 кун пуҫтарӑнаҟ. Тата мӑйӑн 1-мӗшӗ пур, вӑл кун есӗр ирӗк пулнӑ. Телейлӗ есир, Мейӗр, пӗлтӗрхи ҫул—виссоккосни ҫул пулнӑ, ахалӗн хисепе тата пӗр кун ҫитмен пулӗҫӗ.

Мейӗр, паллах, хӑйӗн шалу ӳстерме ыйтса ҫырнӑ хутне йӑпӑштӑн кайалла илсе ҫикнӗ.

Нимӗҫлерен Хумма Ҫеменӗ куҫарнӑ.

(«Der Neue Weg» шурнал).

## Икӗ пуҫлӑ, тискер ҫын.



— Мӗншӗн ӗкӗкхи укҫасем ҫине икӗ пуҫлӑ ӑмӑрт-кайӑксем ӳкернӗ.

— Патша икӗ пуҫлӑ пулнӑран.

### Халӑх йӗркипе.

— Ӑҫта кайан инке?

— Старике сута парас, тетӗп.

— Уйӑрлаттӑри мӗн?

— Уйӑрлман та... Пилӗк аҫа тусан та старик елемент тӳлеместь. Укҫа тем тума та кирлӗ. Ҫавӑнпа сута парас, терӗм.

Майак.

# Паттăр Çтаппанăв милитси.

Вăрмар районĕнҫи Çтаппанăв Трахвин йатлă милитси хăйĕн пуçлăхĕнҫен самоконпа шутсăр хытă кĕрешме хушакан хут илет. Пĕрре вуласа пăхрĕ Çтаппанăв ку хута, анҫах нимле ресоҫутси те хумарĕ. Шухăшласа тăрсан—тăрсан тепре вуларĕ те, калама çук, шутсăр хытă кĕрешес тесе, кранташ хуçăкĕпе ресоҫутси хурса, хăй аллипе хăй ал пусрĕ.

— Иурайĕ, кĕрешĕпĕр, штушă! Сапан туйĕнҫинҫен те хытă пулĕ, тесе каллямалла уткаласа илҫĕ.

Çӳресен-çӳресен, пуçлăх йанă хута тепре вуласа пăхрĕ. Хут каллех шутсăр хытă кĕрешме хушайĕ. Ҫăтаймарĕ Çтаппанăв: çаннисене тавăрҫĕ, тумланҫĕ, мĕн турĕ те, тухса карĕ Ҫиҫейкасси йалне.

Милитси, йе пуп йала пырса кĕрсен, пĕтĕм йалти йăгă хускалайĕ вара. Çурпуне, туйа пуçтарăяна йăтă пушшех хайарланайĕ те вăл, кĕрт йăттисем Çтаппанăв çуни çинех сиксе лараççĕ.

— Самоконпа кĕрешиҫен, малтан çаксемпе кĕрешмелле те... Ансăртран ĕçсе ӳсĕрĕлсен, çисе те йарĕç вĕсем, терĕ лашине Путылккин Ваçкин хапхи патнелле çавăрса.

Путылккин хĕрсе кайса сăмакун йухтарайĕ. Çтаппанăв сăмсине нăшт туртса илҫĕ те, самокон йухтараканпа „кĕрешме“ кĕрсе карĕ.

Пăхайĕ Çтаппанăв та тĕлĕнет: йепле кĕрешес? Тăрна куçĕ пек тăптăрă йухайĕ те, йепле тутанса пăхас мар, тет.

Хуçа ĕçтерет, Çтаппанăв йăнкăлт тутарайĕ, кĕрешӳ пуçланса та карĕ ĕнтĕ.

— Вот мĕн, Путылккин, епĕ сана самоконпа тыгрăм. Штрав çĕр тенкĕ хуратăп...

— Çтаппанăв, тусăм! Каçар ĕнтĕ!— йăлăнайĕ Путылккин.

— Вун тенкĕ пар та, каçтăр еппин, хăйамат!—терĕ те, Çтаппанăв тепĕр киле тухса сулланҫĕ.

— Тайош вун тенкĕ!—терĕ кунта та пăртак сыпăă хыççăн.— Памасан çĕр тенкĕ штрав...

— Е, парас, парас. Ма парас мар. Хамăр çын, парас, тет хуçа.

Кунта ĕçрĕ те вун тенкĕ илҫĕ, тепĕр çĕрте ĕçрĕ те вун тенкĕ илҫĕ—пайтах укçа пухăнҫĕ.—Хăйне никам та паллакан çук, ҫăваш сăхманне тăхăннă та, хăйамат паллатăри ăна, тесе йулҫĕç Ҫиҫейкасси йалĕсем. Иатăсем урмăшса вĕрнинҫен те сисеймен, шереметсем. Çтаппанăв пулнă вăл, ӳлĕмрен паллăр.

ЕН. А.

## Хăйнех ĕçлеме тивнĕ.

(Хĕрарăм кунне).



— Машшиниска çуки мĕн сирĕн?

— Мĕнле çук? Пур. Анҫах пурте килĕсене кайса пĕтрĕç. Ку хĕрарăм кунĕ пулассине малтанах пĕлнĕ пулсан, арçын машшинисткăсем тытса тултармаааҫҫĕ мĕн.

## Пуçа кĕнĕ шухăшссм.

Атă хакĕ йӳнелтĕр тесен, рукушăран портфĕлсем тума вĕренмелле.

Пуçа вырăнаçайманнине портфĕле ҫиксе çӳре.

Лаша сĕлĕ çитерсен хӳрине çĕклесе ҫупайĕ, хула çынни хĕрлĕ тавар килсен, хӳрере вырăн йышăнма ҫупайĕ.

## Курӑнми мӑн карап.

Мӑн карапа ишме мӑн шыв кирлӗ. Тем пирки ҫав Мӑналти (Шупашкар районӗ) Михал Миттӑрҫ пӗҫӗк пӗвесенҫе аппаланаҫ,—пӗлместпӗр.

Вӑл кӑҫал хӗлӗпех Советран вӑртгӑн ҫӑпта ҫаптарса, сутӑ туса пурӑнҫӗ. Ахаҫ ҫынсемпе ҫыкӑну ҫукха кун, ҫӑпта ҫаътаракан ушкӑнсемпе ҫыкӑну тытса, вӗсем урлӑ ӗҫлеттерсе пурӑнаҫ. Хӑй пит вӑйлӑ сутӑ туса пурӑнҫӗ, тет Сӑхӑт.

Финакӗнтсем «ҫӗп (ҫӑхӑ) куҫпе» аптраҫҫӗ пуҫ. Амаҫ кирлӗ вӗсене.

## Аслӑ аҫа.

— Анне, анне! Ҫӑмарта ҫитерха.

— Халӗ ҫӑмарта ҫимеҫҫӗ, типӗ тиркеҫҫӗ.

— Еппин есӗ ӗнер, атте армана кайсан, Микиҳ муҫейсен Каврилине ма ҫитертӗн?

Е п ӗ.

## Каҫҫӑпа майра.

Майра хӗр: Халиҫҫен епӗ ес ҫӑваш иккенне пӗлменҫӗ...

Каҫҫӑ: Ҫук, епӗ ҫӑваш мар, суйеҫҫӗ. Килтисем анҫах ҫӑваш.

## Пуштӑ йешҫӗкӗ.

Акӗрле (Старак-йалӗ). Ма есӗр пушӑ ҫурта вуламалли ҫурт, теттӗр. „Капкӑнсӑр“ ҫурт—пушӑ ҫурт пулаҫ вӑл.

И. Пешина. (Тутаркас рай.). Вумпӑ касси йалӗнҫе ерех йухтарма пуҫлани ӗнтӗ 3 ҫул тулгарҫӗ, тетӗн. Иурӗ еппин. Меленик туса иртерме милиционерсем йарӑпӑр.

Пӗлекене (Урпаш йалсоветҫӗ). Иал хушшинҫе арҫури пек ҫӳрекен Ҫилок Лексантӑрӗпе Сантӑркка Йаванне арҫурисем пурӑннӑ ҫӗре йама сирӗн хӑвӑрӑн та пулӑшмалла. „Капкӑн“ ҫине шан та, ху та ҫӑварна карса ап вырт.

М-и К. (Иешкилт) Пасар вӑррипех пурнакан Петӳк маткине тӗрмене кайса ларгас... вӑрлӑхлӑх.

3 ҫулхи такана. Етемрен така пулас килҫи? Ҫӗнӗрен етем пулма хушатӑп.

# Шаратӑ.

(Аҫасем ваҫҫи).

Куҫӗ хура, тӑрри симӗс.
Ҫав каланӑ сӑмахран
Хыҫалтан ик пуквине кӑларсан,
Алфавитри пуҫламӗшӗн
Саспаллипе вӗҫлесен,
Вот сан ваҫҫи куҫҫенеҫ,
Хуннӳ патне пырсассӑн

И ӑ в а.

## Манӑн шухӑшсем.

1. Шурнала шыраса ан ҫӳре, вӑл хӑйех сан пата пырӗ—ҫырӑнса ил анҫах.

2. Ҫулталӑклӑх ҫырӑнса илес пулсан, хутпа перо анҫах кирлӗ, 1 тенки хӑйех тупӑнӗ.

3. Пӗр путылккӑ ерехе 5 минутрах ӗҫсе йаратӑн, ҫулталӑклӑх ҫырӑнса илсессӗн, 12 уйӑх вуласа савӑнӑн.

4. Йӗплӗ ҫӑмах хыпакансене курас пулсан, «Капкӑн» шурнал кирлех.

5. «Капкӑн» кантурӗн атрӗсне пытарас текенсем те пытараймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен ӑна пурте пӗлеҫҫӗ: Чебоксары, конторе газеты «Ҫанаш» для «Капкӑна».

6. Савни сана савасшӑн мар пулсан, хӑйне есӗ «Капкӑн» илсе парасса кӗтнӗрен вӑл.

7. Пирус туртни тӗтӗм пулса пӗтет, ҫырӑнса илнӗ «Капкӑн», хуплушкине тутарсан, 100 ҫул та ыгларах пурӑнма пултараҫ. Хӑв аҫусем те, уйӑрнӑ арӑмун ҫӗнӗрен пулнӑ аҫин аҫисем те вулама пултараҫҫӗ вара ӑна.

8. Темиҫе ҫул пӗрле пурӑннӑ арӑму та йӑлӑхтарма пултараҫ, «Капкӑн» йӑлӑхтарма пултараймаҫ нихӑҫан та.

# Кĕрешмесĕр кĕрешекен.

Тутаркас районĕнҫе хăш пĕр милитсионерсем сăмакунпа пĕр ҫын та тытман пулнă.

(„Канашрая“).



— Тытман, теҫҫĕ. Ак йарса тытрăм.

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 295 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.